# Чӑваш АССР-ӗнчи ӗҫҫынни депутачӗсен вырӑнти Совечӗсене суйланин итогӗсем

1955 ҫулхи февралӗн 27-мӗшӗнче Чӑваш АССР-ӗнчи ӗҫҫынни депутачӗсен вырӑнти Совечӗсен суйлавӗ пулнӑ.

Мӗнпур 884 суйлав участокӗсенчи суйлав комиссийӗсем пӗлтернӗ тӑрӑх, Чӑваш республикинчи ӗҫҫынни депутачӗсен вырӑнти Совечӗсен суйлавӗнче пӗтӗм суйлавҫӑсен 99,93 процентчӗ сасӑлама хутшӑннӑ. Коммунистсемпе партире тӑманнисен блокӗн кандидачӗсемшӗн сасӑлама хутшӑннӑ мӗнпур суйлавҫӑсен 98,64 процентчӗ сасӑланӑ. Депутата суйлама тӑратнӑ кандидатсене пур суйлав округӗсем тӑрӑх та вырӑнти Советсен депутачӗсене суйланӑ.

1. Ӗҫҫынни депутачӗсен районсенчи Совечӗсен суйлавӗнче пӗтӗм суйлавҫӑсен 99,94 процентчӗ сасӑлама хутшӑннӑ. Мӗнпур 1.082 суйлав округӗнче сасӑлама хутшӑннӑ пӗтӗм суйлавҫӑсенчен 98,99 процентчӗ коммунистсемпе партире тӑманнисен блокӗн кандидачӗсемшӗн сасӑланӑ, 1,01 процентчӗ кандидатсене хирӗҫ сасӑланӑ. «Чӑваш АССР ӗҫҫынни депутачӗсен район, хула, ял тата поселок Совечӗсене суйламалли Положенин» 89-мӗш статьи тӑрӑх 10 бюллетене тӗрӗс мар тесе шутланӑ.

2. Ӗҫҫынни депутачӗсен хула Совечӗсен суйлавӗ енӗпе:

а) республикӑна пӑхӑнса тӑракан хуласенче—пӗтӗм суйлавҫӑсен 99,90 процентчӗ сасӑлама хутшӑннӑ. Мӗнпур 364 суйлав округӗнче суйлава хутшӑннӑ пӗтӗм суйлавҫӑсен 98,67 процентчӗ коммунистсемпе партире тӑманнисен блокӗн кандидачӗсемшӗн сасӑланӑ, 1,33 процентчӗ кандидатсене хирӗҫ сасӑланӑ.

б) районсене пӑхӑнса тӑракан хуласенче—пӗтӗм суйлавҫӑсен 99,94 процентчӗ сасӑлама хутшӑннӑ. Мӗнпур 170 суйлав округӗнче суйлава хутшӑннӑ пӗтӗм суйлавҫӑсен 99,02 процентчӗ коммунистсемпе партире тӑманнисен блокӗн кандидачӗсемшӗн сасӑланӑ, 0,98 процентчӗ кандидатсене хирӗҫ сасӑланӑ.

3. Ӗҫҫынни депутачӗсен ял Совечӗсен суйлавӗнче мӗнпур суйлавҫӑсенчен 99,93 процентчӗ суйлава хутшӑннӑ. Мӗнпур 8.210 суйлав округӗнче сасӑлама хутшӑннӑ пӗтӗм суйлавҫӑсенчен 98,24 процентчӗ коммунистсемпе партире тӑманнисен блокӗн кандидачӗсемшӗн сасӑланӑ, 1,76 процентчӗ кандидатсене хирӗҫ сасӑланӑ.

4. Ӗҫҫынни депутачӗсен поселок Совечӗсен суйлавӗнче мӗнпур суйлавҫӑсен 99,89 процентчӗ сасӑлама хутшӑннӑ. Мӗнпур 271 суйлав округӗнче сасӑлама хутшӑннӑ пӗтӗм суйлавҫӑсенчен 98,53 процентчӗ коммунистсемпе партире тӑманнисен блокӗн кандидачӗсемшӗн сасӑланӑ, 1,47 процентчӗ кандидатсене хирӗҫ сасӑланӑ.

Ӗҫҫынни депутачӗсен район, хула, ял тата поселок Совечӗсене суйланӑ депутатсем пурте коммунистсемпе партире тӑманнисен блокӗн кандидачӗсем.

**Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗ.**